Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенчи отчетпа суйлав пухăвĕсенчен

Укçа çитменни перекет çине куç уçрĕ

Эрне ытларах каялла нумай хуçалăхсемпе пĕрешкел условисенче пурăнса-ĕçлесех Анаткасси-Çатракасси-Тушкассисем ыттисемшĕн хăйне евĕр ĕç виçисем пулса тăчĕç. Суворов яч. хис. хуçалăхра çапла тунă та тупăш илнĕ, ĕçлекенсене ытларах явăçтарма пултарнă, пире те вĕсем пек ĕçлеме никам та чăрмантармасть, çавнашкалах тумалла пулать-тăр», – тесе каланине паян час-часах илтме пулать. Çĕрĕ урăхларах-и, патшалăхăн пулăшăвĕ ытларах-и, техники вăйлăрах-и е ĕçлекен халăхĕ нумайтарах – ку «вак-тĕвек» çине пăхакан çук. Эпир вара хуçалăхри отчетпа суйлав пухăвĕ иртнĕ хыççăн паян çак ыйтусене хускатас терĕмĕр. Хаçатăн экономикăпа экологи пайĕн ертӳçи Анатолий БЕЛОВ Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн председателĕпе Владимир Славич АНДРЕЕВПА калаçать. Пирĕн паяхи тĕллевре вулавçăсем асăннă хуçалăх тĕлĕшпе хăйсене хумхантаракан ыйтусем çине тĕрĕс хурав тупасса шанатпăр.

– Владимир Славич, хăвăр ĕç пурнăçне ял хуçалăхĕпе тата тăван хуçалăх аталанăвĕпе сыхăнтарнине мĕнре куратăр тата ăçтан пуçланчĕ вăл?

– Эпир вĕт ял ачисем. Мĕн пĕчĕкрен çĕр ĕçĕпе, атте-аннепе ял çыннисен тăрăшулăхне курса ӳснĕ. Çавăнпа та ĕç ĕмĕрĕн ытларах пайне çар службинче ирттертĕм пулсан та, хресчен пурнăçĕ асран каймарĕ. Çартан тивĕçлĕ канăва тухса тавраннсан та ялтан инçете каймарăм. Тĕрлĕ ĕçсенче, хуçалăхăн инженери службинче вăй хунă хыççăн 2004 çулта хуçалăхăн отчетпа суйлав пухăвĕнче хуçалăх ĕçченĕсем мана кооператив тилхепине шанса пачĕç. Çăмăл пулмарĕ малтанхи утăмсене тума тата пĕрремĕш хĕл каçма. Анчах куç умне тухнă йывăрлăхсем çанăсене тавăрсах ĕçлеме хистерĕç. Хуçалăх аталанăвĕшĕн канăçне çухатнă активпа çапла турăмăр та.

– Мĕнле йывăрлăхсене тĕл пулма тиврĕ Раççей çарĕн ĕнерхи офицерĕн мирлĕ ĕç-хĕлте? Е ял хуçалăх аталанăвĕн утăмĕсем сире çав вăхăтра тивĕçтернĕ?

– Мана атте-анне ачаран йывăрлăхсене курма тата вĕсем умĕнче пуç усмасăр лартнă тĕллевсем патне утма вĕретнĕ. Çакăнта Раççей çарĕнче службăра тăни те хăйне евĕр пулăшу пулчĕ. Çапла вара ял хуçалăхĕ умĕнчи йывăрлăхсене курса тăрсах тата вĕсене тăван енре анлă сарăлма парас мар тесе ĕçе кӳлĕнтĕм. Урамра 2004 çулччĕ. Çанталăк условийĕсене кура тата ĕç дисциплининчи шайрăксене пула çав çул хуçалăх обществăлла выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма 865 тонна тырăпулă, 1300 тонна сенаж, 300 тонна ытларах утă янтăланăччĕ. Çур хĕле çитсен витесенче улăмсăр пуçне апат юлмарĕ. Áçтан пултăр-ха выльăх-чĕрлĕхрен продукци илесси...

– Мĕнле çул суйласа илтĕр-ха вара?

– Унтан-куртан ыйткаласа хĕл каçрăмăр та хамăр ума кун пек пурăнма юрамасть тесе тĕллев лартрăмăр. Тĕллевсене пурнăçлама çĕнĕ техника кирлĕ. Хуçалăхра çав кун тĕлне пĕтĕм техникăн усă курмалли срокĕ тухнăпа пĕрехчĕ. Çапла вара хуçалăх председателĕнчи хамăн тивĕçе техника çĕнетессинчен тата ĕç дисциплинине хытарассинчен пуçларăм. 2005 çултах кредитпа çĕнĕ техника туянма пĕр миллион тенкĕ ĕçе кĕртрĕмĕр. «АПКна аталантарасси» наци проекчĕ пысăк тĕкĕ пулчĕ. Çак çулпа кайса 5 çул хушшинче, хамăр вăйпа илнĕ техникăсăр пуçне, кредитпа 11 миллион тенкĕлĕх техника туянтăмăр. Перекет ыйтăвне малти вырăна кăлартăмăр терĕм. Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсем вĕçĕнче пирĕн хуçалăх çуллен 400 тоннăна яхăн сĕрмелли-çунтармалли материалсем пĕтеретчĕ. Кунта сăлтавсăр тăккалану та самай пулнине шута илсе хама хуçалăха ертсе пыма шансанах çак тăкаксене чакарассине пĕрремĕш вырăна кăлартăм. Тĕрĕсрех каласан, укçа çитменни перекет çине куç уçрĕ. Пĕчĕк танлаштару, пĕлтĕр уй-хир ĕçĕсене йăлтах вăхăтра пурнăçласа сĕрмелли-çунтармалли материалсене 126 пин литр пĕтертĕмĕр. 400 тоннăпа танлаштарсан, перекет мар-и-ха çакă? Кăна хуçалăх ĕçченĕсем те ăнланса илчĕç. Çапла вара хуçалăх лавне пĕрле туртса тата перекетлĕх ыйтăвне кун йĕркинчен кăлармасăр ĕçлесе пĕлтĕр 2 миллион тенкĕ ытла таса тупăш илтĕмĕр.

– Тупăш çулĕ хăв укçуна ĕçлеттермесен алăка уçмасть пулĕ çав. Кун пирки мĕн калайратăр?

– Сирĕн ыйту тĕрĕсех. Харпăр хăй укçине ĕçлеттермесĕр кĕсьене укçа хушăнмасть. Çакна тивĕçлĕ пĕтĕмлетсе хам председателе ларнă хыççăн производствăна аталантарма 50 миллион тенкĕ укçа хыврăмăр. Çак утăма туни 135 миллион тенкĕ ĕçлесе илме май пачĕ. Юлашки 5 çул хушшинче эпир çулленех тупăшлă ĕçленĕ. Пĕрлехи тăрăшулăхпах эпир 2006 çулта лизингпа пĕрремĕш çĕнĕ МТЗ-82 трактор, хамăр укçапа пресс-подборщик, 2 кĕрепле, пĕр косилка туянтăмăр. 2007 çулта тĕрлĕ мелсемпе усă курса 3 трактор ХТЗ-17221, икĕ МТЗ-82, виçĕ дискатор, косилкăсем, дизельпе ĕçлекен автомашина туянтăмăр. 2008 çул та техника туянассинчен унчченхи çулсенчен юлсах каймарĕ. Çак çул пирĕн автотрактор паркне дизельпе ĕçлекен 2 автомашина, «АКРОС» комбайн, хирте кăкарса ĕçлемелли нумай техника хутшăнчĕ. Иртнĕ çул вара КЗСа тĕпрен çĕнетме явăçтартăмăр. Вăт çапла пыратпăр аталанса. Çĕнĕ технологисене тĕплĕн алла илсе паян эпир Юнкă тата Турай тăрăхĕсенчи пушă выртакан нумай çĕрсене ĕçлеттерме пуçларăмăр.

– Умри тĕллевсем?

– Тĕллевĕсем пур, паллах. Анчах тытман упа тирне сӳме васкамăпăр-ха. Çакна çеç калатăп, çитес çулсенче ытти ĕçсемпе пĕрлех выльăх-чĕрлĕх фермисене реконструкцилесси малти вырăна тухĕ. Нумай шутларăмăр та, çак ĕçе тумасан пирĕн малашлăх та пулмĕ.

Паян – Пĕтĕм тĕнчери сывлăх кунĕ

Сывлăх та, телей те çемьерен пуçланать

– Нимех те мар, ку вăл суррогат ĕçнипе, – ним пулман пек каласа хучĕ пĕверне тĕрĕслеме анализ панă арçын, результатсем лайăхах маррине пĕлсен.

– Ĕçмеллех-и вара ăна? – ыйтрĕ тухтăр.

– Хăль пурте ĕçеççĕ. Аптекăран вăл шĕвексене миххи-миххипех илеççĕ. Çĕр улми лартма та туянаççĕ çав пĕчĕк кĕленчесенчи спирт пур шĕвеке.

Шăпах çак тĕслĕхрен пуçларĕ калаçăва районти тĕп больницăн наркологĕ, психотерапевчĕ Л.М. ИВАНОВА.

Тĕлĕнме кирлех-ши çакăн хыççăн шкулта уява мĕнле ăнланнине ӳкерсе пама ыйтсан, хăш-пĕр ачасем эрех кĕленчине ӳкернинчен? Пушă эрех кĕленчипе тата ĕçсе ӳсĕрĕлнĕ арçынсемпе хĕрарăмсенчен ытла нимех те курман ачасем паян çук мар вĕт. Мĕнле йĕрпе кусĕ кайран вĕсен пурнăç кустăрми? Хуйха-суйха эрехпе пусаракан ашшĕ-амăшĕ сахал-и тата паян? Çакăнпа вĕсем пĕр проблема çумне тата темиçе хушнине ăнланаççĕ-ши?

– Ача эрех-сăрана е наркотика пĕрре тутанса пăхсан, аллисем унтах туртăнма пуçлаççĕ, – тет Лариса Меркурьевна. – Çавăнпа та ашшĕ-амăшĕн проблемăсемпе стреспа урăхла майсемпе кĕрешмелле. Ачасем хăйсем çине пăхнине, хăйсенчен тĕслĕх илнине пĕлнĕ çĕртех вĕсен шăпипе выляма кирлех-ши? Çук çав. Çакăн çинчен пулĕ паян сăмахăмăр.

– Лариса Меркурьевна, ачасем сывă пурнăç йĕркине тĕпе хурса ӳсчĕр тесен, ашшĕ-амăшĕн мĕн тумалла?

– Тĕрĕс воспитани памалла. Урăхла каласан, ача хăй тĕллĕн шутлама пултаракан личноç пулса ӳсмелле. Унăн пурнăç тĕллевĕ пултăр, усал йăласемсĕрех пурнăç илемне курма-туйма пултартăр. Хăй тăрăшнипе йывăрлăхсене çĕнтерме пултартăр. Çакă ăна хăйне хăй тата ытларах хисеплеме пулăшать.

Ашшĕ-амăшĕн хăйĕн ачине шанмалла. Çав вăхăтрах куçран та вĕçертмелле мар. Ывăлĕ е хĕрĕ камсемпе туслă пулнине пĕлмелле. Лешсем сиенлĕ йăлана иленес пулсан, çакăн çинчен вăхăтра пĕлме тăрăшмалла. Ачисене эрех-сăра, наркотик сиенĕ çинчен каласа парсах тăмалла.

– Наркотик тенĕрен, ăна пĕрре тутаннипех нимех те пулмасть, тесе шутлаççĕ пулмалла вĕсем.

– Наркомансен пурнăçне тĕпчени çакна кăтартса парать. Шăпах пĕрремĕш хут тутанни ĕнтĕ çул çитмен çамрăкăн пĕтĕм пурнăçне тепĕр майлă çавăрса хурать. Наркомансем каланă тăрăх, ентĕн те çын «йывăр» наркотика пĕр хут тутанса пăхрĕ пулсан, хăçан та пулин пурпĕрех вăл ăна тепре алла илет. Каярахпа çак пурнăç йĕркине куçать. Хăй вăл пĕрре тутаннă хыççăн урăх тытмастăп, тесе шутласан та.

«Йывăр» наркотика пĕрре тутансанах наркотикран хăрас туйăм пĕтет, халиччен курман туйăмпа тĕл пулать. Наркотик сĕрĕмĕнчен тухсан хăйне халичченхи пекех туять пек, наркотик серепине çакланнине те туймасть. Унтан ăна пурнăç наркотиксăр илемсĕр туйăнма пуçлать. Наркотикпа аппаланакансемпе пĕрле лексен, вăл каллех алла ун енне тăсать. Каярахпа кăмăла çĕклеме пуçлать çакăн пек майпа. Çапла вара хăй сисмесĕрех наркоман пулса тăрать.

– «Çăмăл» наркотиксем çинчен мĕн калама пултаратăр?

– Вĕсем те çыннăн организмне хытă сиен кӳреççĕ. Наркотикпа пурнăçа илемлĕрех туйма хăнăхаççĕ те унсăр пурăнайми пулаççĕ. Вара «йывăртарах» наркотик тутанас шухăш çуралать. Ахальтен мар ĕнтĕ наркомансем çапла калассĕ: «Наркотик мĕн тути каланине пĕлмелле мар, пĕрре тутансан кайрĕ вара...»

– Камсем хăрушлăх кăларса тăратаççĕ çул çитмен çамрăксемшĕн?

– Тин çеç наркотик тутанма пуçлакансем. Мĕншĕн тесен вĕсем наркотик тутанассине хăйсем контроллеме пултаратпăр, ун серепине кĕрсех ӳкместпĕр, тесе шутлаççĕ. Наркотик мĕн тери хăрушă пулнине ăнланмаççĕ. Çапла майпа ыттисем те вĕсем пек тума пултараççĕ.

– Камсем çакланма пултараççĕ наркоманин тĕпсĕр тарăн çырмине?

– Наркотик çинчен ăна тутанса пăхнă çынсем каланинчен çеç пĕлекенсем. Куртан ытларах – ачана мĕн пĕчĕкрен хăйне илĕртекен япаласене пурне те илме çук тесе хăнăхтармасан. Ачан кăмăл çирĕплĕхĕ пулмалла.

– Çул çитмен çамрăк наркомани серепине çакланнине мĕнле пĕлмелле?

– Шкула çӳреме, вĕренме пăрахать. Малтан кăсăкланнă япаласем уншăн халĕ интереслĕ мар. Хăйне хăй хакламасть е пачах тепĕр майлă: хăрушлăхран те хăрамасть. Çĕнĕ туссем тупăнаççĕ, малтанхисемпе каласмасть. Часчас укçа ыйтма пуçлать, наркомансен сăмахĕсемпе каласма пуçлать.

Алли çинче укол йĕрĕсем, тĕлсĕр пăхма пуçлать, куç шăрçисем е сарăлнă, е пĕрĕннĕ, ӳчĕ шуранка, начарланса каять. Апат анми пулать, пĕрмаях ĕçес килет, çав тери пылак çиес килет, тар нумай тухать, пуç, вар-хырăм ыратать, час ывăнать, пуçĕ астăвасси чакать, тарăна кайнă сунас аптратать, тĕлсĕр каласать, тӳрĕ утаймасть.

– Мĕн тумалла çак инкек килсе çапсан (ун пекки никамăн та ан пултăр)?

– Вăрçма кирлĕ мар. Кун пек туни ашшĕ-амăшĕ ăна хăйсенчен тĕксе яни пулать. Специалистран пулăшу ыйтма именмелле мар. Ашшĕ-амăшĕ инкеке лекнĕ ачашăн юлташ пулмалла. Вăл çывăх çынсем хăйне пулăшма хатĕррине туйтăр. Ашшĕ-амăшĕ хăйне юратни, ăна шанни çак инкеке пĕрле çĕнтерме пулăшать. Мĕншĕн тесен шăпах çак енсем нумайăшне çак инкеке çĕнтерме пулăшнă.

Ачана пулăшас тесен ашшĕ-амăшĕн улшăнма тивет. Ывăлĕ е хĕрĕ алла мĕншĕн наркотик илнине пĕлмелле, пурнăçра ăна мĕн интереслентернипе кăсăкланмалла. Ачана инкекрен çăлас тесе ăна ытларах тимлĕх уйăрмалла. Хăйсен те сывă пурнăç йĕркипе пурăнмалла, ачисемшĕн ырă тĕслĕх пулмалла. Кун пек çемьери ача пурнăçра тĕрĕс çулах суйласа илĕ.

Пĕтĕм тĕнчери сывлăх кунне халалласа çĕршывĕпех концертсемпе форумсем, ытти мероприятисем иртеççĕ. Иртнĕ эрне кун Муркашри физкультурăпа спорт комплексĕ умĕнче çамрăксем сывă пурнăç йĕркипе пурăнма чĕнсе агитплощадка уçрĕç. Вĕсем унта иртенçӳрене сывă пурнăç йĕркипе пурăнма чĕнекен буклетсем валеçрĕç. Ку мероприятие çакăнта кашни эрне кунах ирттерме шутлаççĕ.

Л. ПАВЛОВА
каласнă.

Гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру

Хăрушлăхран пĕрле хӳтĕленмелле

Пушар хăрушсăрлăх ыйтăвĕ кун йĕркинче çивĕч тăнине район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру пайĕн ĕçĕнчен те аван курăнать. Раççейре, республикăра пулса иртекен инкексем те пушар хăрушсăрлăхĕ пуш параппан çапни марри пирки уççăнах калаççĕ. Малалла каланинчен вара кашнин тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳсем тăвасчĕ, ырана хăварса мар – паянах.

Пушар хăрушсăрлăх ыйтăвĕсене иртнĕ уйăхра районта чи çӳллĕ шайра пăхса тухрĕç. Малтанах ку ыйту пуш уйăхĕн 11-мĕшĕнче депутатсен районти Пухăвĕн кун йĕркинче пулчĕ. Тепĕр эрнерен иртнĕ чрезвычайлă лару-тăруран асăрханас тата ăна сирсе ярас енĕпе ĕçлекен комиссин ларăвĕнче те пушар хăрушсăрлăхĕ тĕп вырăнта тăчĕ. Пуш уйăхĕн 22-мĕшĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов «2010 çулхи çуллахи пушар хăрушлăхлĕ сезона йĕркеллĕ хатĕрленсе кĕтсе илесси çинчен» йышăну туни те районта ку ыйту çине чи çӳллĕ шайра пысăк тимлĕх уйăрни пирки калать.

Пушар хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтересси кăткăс та яваплă ыйту пулнăранах-тăр, ăна депутатсен районти Пухăвĕн ларăвĕн кун йĕркине те кĕртрĕç. Аяларах илсе кăтартакан цифрăсене пăхсассăн та çакă уççăнах курăнать. Çапла вара 2006 çулта район территорийĕнче пулнă 49 пушарта 12 çын вилнĕччĕ пулсан, 2007 çулта вутçулăм алхаснă тĕслĕхсем 54 пулчĕç, вĕсем 9 çын пурнăçне татрĕç. Çак çулсенче тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳ тунăран 2008 çулта «хĕрлĕ автан» çунат çапассине 2 хут чакарма май килчĕ, анчах çав инкексенче те 2 çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлчĕ. Пĕлтĕр районта тухнă 37 пушарта 2 çын пурнăçĕ татăлчĕ. Пушар хăрушсăрлăх правилисене сĕмсĕррĕн пăссан инкек-синкек виçи самантарх ӳссе каясси те пулать. Акă кăçалхи пуш уйăхĕн 18-мĕшĕнче Апчар ялĕнче тухнă пушар ку таранччен тикĕс пынă пурнăçа икĕ çын çунса кайнипе тĕксĕмлетрĕ. Çакă та пушар хăрушсăрлăх ыйтăвне тăтăшах малти вырăнта тăратмалли пирки систерет. Кунта вара «хĕрлĕ автанран» пĕрле сыхланасси те малти вырăна тухать. Çакă Муркаш енре яланах тĕп вырăнта пулнине иртнĕ çул пирĕн районпа Çармăс Республикин Горномарийски район администрацийĕ пушар сӳнтернĕ тата чрезвычайлă лару-тăрăва сирсе ярнă çĕрте пĕрле ĕçлеме килĕшӳ туни те çирĕплетет.

Пушарсемпе кĕрешессин тĕп ĕçĕ – профилактикăна тивĕçлĕ шайра туса ирттерни. «Хĕрлĕ автана» пуç çĕклеме памалла мар. Çакăнта чрезвычайлă лару-тăрăва асăрхаттарассипе тата сирсе ярассипе, пушар хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтерессипе ĕçлекен комисси, район администрацийĕн чрезвычайлă лару-тăрупа гражданла оборона пайĕ, 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕн сотрудникĕсем, ВДПО, шкул тата ача сачĕсенчи вĕрентекенсен коллективĕсем, массăллă информаци хатĕрĕсем пĕр çыхăра пулни пĕлтерĕшлĕ. Профилактика ĕçне чи çӳллĕ шая çитерсен çеç – кашни ача шăрпăкпа вылянин инкекне ăнланасси, ял çыннисем пĕр çын пек пулса кивелнĕ электропроводкăсене улăштарасси çине тимлĕх уйăрсан, çуркунне типĕ курăка çунтарассипе пысăк тимлĕх уйăрсан, электроприборсемпе çунакан кăмакасене хуçасăр хăвармасан тата уйрăмах ӳсĕрле вырăн çинче пирус туртассине пăрахăçласан – инкексен калăпăшне чакарма пулать. Ку вăл – пĕрлехи ĕç, пĕрлехи тĕллев.

Çак ĕçре эпир пĕччен маррине «Ударник», «Свобода», «Герой», Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикинче юсавлă та шанчăклă пушар деповĕсем ĕçлеттерни те кăтартса парать. Каламалла, «Ударник» хуçалăхăн пушар деповĕн никĕсĕ çинче ял тăрăхĕсем хушшинче пушар хуралĕ ĕçлет. Унти 6 водителе Йӳçкасси, Чуманкасси, Уйкас Янасал, Шетмĕпуç ял тăрăхĕсем тытса тăраççĕ. Çак тĕслĕх эпир пĕрле пулсан çеç вăйлине çирĕплетсе парать. Оринин, Ярославка, Юнкă ял тăрăхĕсенче те сыхланса юлнă пушар машинисемпе çĕнĕ условисенче Йӳçкассисен çулне суйласа илсе ĕçлессе шанас килет. Çапла пултăрччĕ те.

Н. МИЛЮТИН,
район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру секторĕн ертӳçи.

Спорт

Муркаш ятне ямарĕç

Муркаш Енĕн спортри ӳсĕмĕсем – кашниншĕн хăйне евĕр савăнăç. Спорт аталанăвĕ пирĕн çамрăксем сывă пурнăç йĕркине суйласа илни пирки калать. Ку вара республика тата Раççей ертӳçисем малашлăха пăхса ыйăнакан тĕллевсемпе тӳр килсе пырать. Çакă, паллах, пурне те савăнтарать.

Юлашки çулсенче районта вăй илсе пыракан спорт тĕсĕсенчен пĕри вăл – бокс. «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексне уçнă чух ЧР Президенчĕ Н. Федоров Муркашсене бокс рингĕ парнеленин усси паян куç умĕнчех.

Пуш уйăхĕн 20-27-мĕшĕсенче Элĕкре бокс тĕсĕпе иртнĕ республика турнирĕ те спортăн çак енĕпе Муркашсем пĕр вырăнта тăманнине çирĕплетрĕ. С. Черкашинпа О. Сютруков тренерсемпе С. Ильин обществăлла вĕрентекен çак ăмăртура Муркаш Ен ятне сыхлама 10 спортсменран тăракан командăна илсе кайрĕç. Кайрĕç те киле çĕнтерӳпе тавраннĕç.

Уйрăмах Калайкассинчи вăтам шкулта вĕренекен Денис Грачев палăрчĕ. 32 килограмлă виçе категорийĕнче ăмăртса вăл 3 тытăçу ирттерчĕ. Иккĕшĕнче ним сăмахсăр çĕнтерсе, тепринче очкосем ытларах пухса пĕтĕмĕшле пĕрремĕш вырăн çĕнсе илчĕ. Унăн пĕр шкулта вĕренекен юлташĕ Г. Балканов çак виçе категорийĕнчех 2-мĕш вырăна тухрĕ. Çатракассинчи тата Муркашри вăтам шкулсенче вĕренекенсем В. Борисовпа С. Кожевников та кĕçĕн яшсем хушшинче 2-мĕшпе 3-мĕш вырăнсене алăран вĕçертмерĕç.

Паян Муркашсен 7 боксертан тăракан команди Кстово хулинче иртекен пĕтĕм тĕнчери турнирта вăй виçет.

А. ПЕТРОВ.